ХЫПАР

Чăваш ачисен хаçачĕ

# Тантăш

6+

44 (4458) №, 2015, октябрь /юпа/, 29
(1931 çулхи январĕн /кăрлачăн/ 12-мĕшĕнче тухма тытăннă).

Хакĕ ирĕклĕ.
Индексĕ: 54802.

ÇĔНĔ ĂРУ

## «Манăн пичче ылтăн пуль...»



**Шкулта чуна савăнтараканни нумай çав. Урок ыйтнине лайăх каласа пани, «тăваттă» е «пиллĕк» паллă илни чун уявĕ мар-и-ха?**

Саккăрмĕш класри Кирилл Чернов пур предметпа та аван ĕлкĕрсе пырать, ĕнтĕ пĕрремĕш класранпах вĕренӳ отличникĕ. Çавăнпа виççĕмĕш класра ăс пухакан Таня йăмăкне те ыррине çеç сунать.

– Аннепе аттене савăнтарас тесен, нумай вуламалла, çырмалла. Çавăн чухне çеç журналта «5» паллăсем нумай пулĕç, – ăнлантарать пиччĕшĕ йăмăкне.

Кĕçĕнни аслин сăмахĕсене ăша хывать, урокра тимлĕ пулнисĕр пуçне килти ĕçсене те тирпейлĕн пурнăçлать. Виççĕмĕш класра виçĕ ача, Таня – староста. Артем Савиновпа Олеся Родионовăна кирек ăçта та пулăшать, сĕнӳ-канаш парать.

Кирилăн вара юратнă предмечĕ – физикăпа математика. Тĕрлĕ задача, уравнени тупсăмĕсене чи малтан шутласа тупаканĕ. Ахальтен мар пĕлтĕр районта иртнĕ физика олимпиадинче 1-мĕш, математика ăмăртăвĕнче 2-мĕш вырăн йышăнма пултарнă.

– Физикăпа юратнă аттем, Николай Александрович, вĕрентет. Килте те ахаль лармастпăр. Час-час кăсăк хăнăхтарусем пурнăçлатпăр. «Ну, ачам, паянлăха çитĕ тата ырана валли те хăварас», – тет те атте, кăшт кăмăлсăрланатăп. «Атте, атя ĕнтĕ тепрер ĕç парсам», – тесе йăлăнни те пĕрре мар пулнă. Задача, уравнени шутласси – чун иленĕçĕ, – хăпартланать арçын ача.

Яланах çĕннине пĕлме тăрăшакан Кирилл пĕлтĕр республика ăмăртăвĕнче «Питрав вăййи» темăна анлăн çутатнă. Музыка шкулĕнче ăнăçлă вĕренекенскер хуткупăсне туртса ярса юрă та шăрантарнă. Тĕлĕнтернĕ те савăнтарнă вăл жюри членĕсене. Конкурсра виççĕмĕш вырăна тухнă. Çитĕнӳ ăна чунтан савăнтарнă.

– Ку ĕçре анне, директорăн воспитани енĕпе ĕçлекен çумĕ Галина Вячеславовна, нумай пулăшрĕ. Уншăн ăна пысăк тав. Унччен пирĕн тăрăхра Питрава чаплă ирттернĕ. Ятарласа çав кун така пуснă, пуç-ура яшки пĕçернĕ. Тĕрлĕрен тутлă çимĕç хатĕрленĕ. Чăваш тумĕ тăхăннă халăх юрă картине тăнă, вăйă выляна, – ăнлантарать Кирилл.

Кирила шкулта пĕрле вĕренекенсем çеç мар, педагогсем те хисеплеççĕ, юратаççĕ. Компьютера лайăх пĕлекенскер вĕрентекенсене ку енĕпе нумай пулăшать.

Паян кайăксем валли сырăшсем ăсталать Кирилл. «Умра – сивĕ хĕл. Кайăксене хĕрхенетĕп, çавăнпа ырă ĕç пурнăçлама тăрăшатăп», – мăнаçланать хăпартланса. Акă çывăха йăмăкĕ пырса тăчĕ. Хыççăн – амăшĕ. «Анне, анне, кала-ха, пĕчĕклех килĕштернĕ ĕç ĕмĕр юратнă ĕç пулса юлать-и? Пиччен алли ылтăн вĕт, э? Е тата задача-уравнени шутлассипе ăна çитекен те çук. Ӳссен пиччем мĕнле професси суйлĕ-ши? Ман шутпа, Кирилл кирек ăçта та пултарулăхĕпе çеç палăрĕ», – савăнăçлăн пуплерĕ Таня пĕртăванĕ ăсталанă сырăша сăтăркаланă май.

*Элиза ВАЛАНС.*

Елчĕк районĕ,
Çирĕклĕ Шăхаль.

**АВТОР сăнӳкерчĕкĕнче**: Кирилл Чернов юратнă амăшĕпе Галина Вячеславовнăпа тата йăмăкĕпе Таньăпа.

### ÇЫРĂНТАРУ – 2016

**Вăхăт шав малаллах шăвать. Тин çеç вĕренӳ çулĕ пуçланчĕ. Ак, сисмĕпĕр те, пĕрремĕш чĕрĕк, унтан иккĕмĕшĕ те вĕçленĕç. Вĕсемпе пĕрлех «Тантăш» хаçатпа «Тетте», «Самант» журналсене çырăнмалли тапхăр та вăшт кăна иртсе кайĕ. Эсир çак кунсенче вĕсене çырăнмасан, кайран кулянмалла ан пултăрччĕ çеç. Васкăр! Çырăнса илĕр! Хăвăр çырăнăр та тусăрсемпе кӳршĕсене те кун пирки калăр. Вĕсем те çак кăларăмсемсĕр ан юлчăр!**

# Тĕрлĕрен: вула та пĕл

# «Чăваш кĕнеки. Пултаруллă çамрăксем»

## конкурс çĕнтерӳçисем паллă

**Чăваш кĕнеке издательствипе «Тантăш» хаçат редакцийĕ çулсерен ирттерекен «Чăваш кĕнеки. Пултаруллă çамрăксем» конкурса Раççейре Литература çулталăкне, республикăра К.В. Иванов çулталăкне тата Чăваш кĕнеке издательстви 95 çул тултарнине халаллană. Конкурса 171 ача хутшăнчĕ.**



Илемлĕ те пуян ĕçсем тĕрлĕ районпа хуларан чылай килчĕç. Элĕк, Йĕпреç, Çĕмĕрле, Елчĕк, Куславкка, Патăрьел, Тăвай районĕсем тата Шупашкар, Çĕнĕ Шупашкар, Çĕрпӳ, Канаш хулисем уйрăмах хастар пулчĕç. Тутар Республикинче, Самар тата Чĕмпĕр облаçĕсенче пурăнакансем те пирĕн конкурса хапăлласах йышăнни уйрăмах савăнтарчĕ. «…Эпир шкулта чăваш чĕлхи вĕренетпĕр. Эрнере пĕр сехет. Ку питĕ сахал, çавăнпа та чăвашсем çинчен çырнă кĕнекесене тупса вулама тăрăшатпăр», – тесе çырать хăйĕн сочиненийĕнче Чĕмпĕр облаçĕнчи Чӳреккелти шкулта вĕренекен Алена Волынщикова.

Конкурса хутшăнакансен ĕçĕсемпе паллашсан чăваш ачисем тăван халăх юмахĕсемпе халапĕсене уйрăмах килĕштерни палăрчĕ. Кашниех юратнă сăнарсене тăрăшса калăплани сисĕнет.

Пуринчен ытла вара тĕрлĕ ӳсĕмри ачасем Нарспи сăнарне калăпланă, ун телейсĕр шăпи пирки шухăшласа çырнă. «...Çуллахи хĕвеллĕ кун çемьепе пахчара ларакан кану пӳлĕмне пăсма шут тытрăмăр. Кашнин хăйĕн ĕçĕ. Атте мана сĕтел йăтса тухма хушрĕ. Ăна асăрханулăн йăтрăм пулин те, сунтăхĕ яр усăлса кайрĕ те, унти пурлăх урайне чăл-пар сапаланчĕ. Куç тĕлне пĕр пысăк укçа лекрĕ. Эпĕ ăна алла илтĕм. К.В. Иванов сăнарне ӳкернĕ иккен унăн тулаш енне!

Асанне те çак укçапа кăсăкланчĕ, ăна ман алăран илсе енчен енне çавăркаларĕ. Унтан вăл, сакăр вун çул урлă каçнăскер, ассăн сывласа хăйĕн шухăш çăмхине сӳтме пуçларĕ: «Тĕлĕнмелле пултаруллă çын-çке вăл Константин Иванов. Нарспи сăнарĕнче авалхи кашни чăваш хĕрĕн шăпи упранать пек туйăнать мана», – çаппа уçса парать «Интереслĕ кĕнеке» номинацие хутшăннă Рома Евдокимов хăйĕн шухăшĕсене.

Чăнах та, Нарспие халаллană ӳкерчĕксем те чылай, çавăнпа та «Манăн юратнă сăнар» номинацири çĕнтерӳçĕсене палăртнă чух çапла йышăнтăмăр: кашни ӳсĕмре юратнă кĕнеке тăрăх ӳкернĕ тата Нарспи сăнарне чи лайăх калăпланă çамрăк ӳнерçĕсене çĕнтерӳçĕ тесе палăртмалла.

**Кĕçĕннисем хушшинче «Манăн юратнă сăнар»** номинацире **Даша Макарова** /Çĕрпӳри 1-мĕш шкул. Ертӳçи – ***И.Г. Орлова***/;

**«Чи илемлĕ Нарспи»** номинацире **Арина Ефимова** /Шупашкарти пуçламăш пĕлӳ паракан 1-мĕш шкул. Ертӳçи – ***С.Г. Ефимова***/;

**Вăтам ӳсĕмрисем хушшинче «Манăн юратнă сăнар»** номинацире **Николай Майоров** /Патăрьел районĕнчи Патăрьелти 1-мĕш шкул. Ертӳçи – ***В.Ф.Федорова***/;

**«Чи илемлĕ Нарспи»** номинацире **Анастасия Беляева** /Шупашкарти 27-мĕш шкул. Ертӳçи – ***А.С. Мешкова***/;

**Аслăраххисем хушшинче «Манăн юратнă сăнар»** номинацире **Анастасия Осипова** /Канаш районĕнчи Вăтапуç шкулĕ. Ертӳçи – ***Л.П. Григорьева***/;

**«Чи илемлĕ Нарспи»** номинацире **Дашăпа Анна Михайловăсем** /Йĕпреç районĕнчи Çăкалăх шкулĕ. Ертӳçи – ***Ю.В. Кошелева***/ çĕнтернĕ.

**«Вулама сĕнетĕп!»** номинацире **Милана Ларионова** /Куславккари 3-мĕш шкул. Ертӳçи – ***Л.Л. Кирбитова***/ тата **Маша Никитина** /Муркаш районĕнчи Муркаш шкулĕ. Ертӳçи – ***Н.И. Ястребова***/ мала тухнă.

**«Ача аллипе хатĕрленĕ кĕнеке»** номинацири çĕнтерӳçĕсене палăртма çăмăл пулмарĕ. Кашни кĕнеки питĕ илемлĕ, пуян содержаниллĕ. Çак номинацие хутшăнакан ĕçсемпе Чăваш кĕнеке издательствин пур ĕçченĕ те: редакторсем, ӳнерçĕсем, дизайнерсем, корректорсем, кĕнеке сутакансем - паллашрĕç, ача аллипе хатĕрленĕ кĕнекесене тĕрлĕ енчен хакларĕç. Çĕнтерӳçĕсем виçĕ вырăна тивĕçрĕç:

**Кĕçĕннисем хушшинче 1-мĕш вырăна Женя Зайцева** /Канаш хулинчи И.А. Кабалин ячĕллĕ 11-мĕш шкул. Ертӳçи – ***Д.Ю. Вершинина***/;

**2-мĕш вырăна Кристина Потапова** /Тăвай районĕнчи Пуянкасси шкулĕ. Ертӳçи – ***А.В. Павлова***/;

**3-мĕш вырăна Виталина Шаринкина** /Комсомольски районĕнчи Хырай Ĕнел шкулĕ. Ертӳçи – ***З.М. Мударисова***/ çĕнтернĕ.

**Вăтам ӳсĕмрисем хушшинче 1-мĕш вырăна Диана Мердеева** /Тутар Республикинчи Çĕпрел районĕнчи Матак шкулĕ. Ертӳçи – ***М.И. Ермолаева***/;

**2-мĕш вырăна Татьяна Никифорова** /Çĕрпӳри ятарлă /коррекци/ 2-мĕш интернат шкул. Ертӳçи – ***Л.В. Александрова***/;

**3-мĕш вырăна Светлана Симцова** /Самар облаçĕнчи Шунтал районĕнчи /Палантай шкулĕ. Ертӳçи – ***Г.Л.Симцова***/ çĕнсе илнĕ.

Сочиненисене хакланă чухне те Чăваш кĕнеке издательствин редакторĕсемпе корректорĕсем пурте хутшăннă, çĕнтерӳçĕсене çаксене палăртнă:

**«Интереслĕ кĕнеке»** номинацие **кĕçĕн ӳсĕмрисем хушшинче Ариадна Емельянова** /Тутар Республикинчи Çармăсан районĕнчи Йăвашкел шкулĕ. Ертӳçи – ***М.Л. Назарова***/; **Слава Васильев** /Шупашкарти хăш-пĕр предметсемпе тарăнрах пĕлӳ паркан 49-мĕш шкул. Ертӳçи – ***Т.В. Иванова***/;

**Вăтам ӳсĕмрисем хушшинче «Интереслĕ кĕнеке»** темăпа **Вася Васильев** /Çĕрпӳри ятарлă /коррекци/ 2-мĕш интернат шкул. Ертӳçи – ***Л.В. Александрова***/;

**«Кĕнеке – пирĕн çемьен чи лайăх тусĕ»** темăпа **Настя Садовникова** тата **Алена Волынщикова** /Чĕмпĕр облаçĕнчи Чӳреккел шкулĕ. Ертӳçи – ***Л.Ф. Ярославская***/;

**Аслăраххисем хушшинче «Юратнă кĕнеке»** темăпа **Рома Евдокимов** /Йĕпреç районĕнчи Чăваш Тимеш шкулĕ. Ертӳçи – ***Н.А. Евдокимова***/, **Саша Васильева** /Çĕнĕ Шупашкарти 17-мĕш шкул. Ертӳçи – ***Е.А. Андреева***/;

**«Кĕнеке – пирĕн çемьен чи лайăх тусĕ»** темăпа **Андрей Иванов** /Етĕрне районĕнчи Мăн Чураш шкулĕ. Ертӳçи – ***Н.К. Черлакова***/ çĕнтернĕ.

Унсăр пусне Чăваш кĕнеке издательствин хавхалану парнисене тивĕçнисем те чылай. Вĕсем пирки пирĕн сайтра www.chuvbook.ru адреспа тĕплĕнрех вуласа пĕлме пулать. Конкурса хутшăнакансене тата вĕсен ертӳçисене чунчĕререн тав тăватпăр, çĕнтерӳçĕсене **чӳк уйăхĕн 3-мĕшĕнче Шупашкар хулинчи Чăваш Республикин ачапăчапа çамрăксен библиотекинче 12 сехетре** чыслассине пĕлтеретпĕр. Адресĕ: И.Яковлев проспекчĕ, 8а çурт /«Газопровод» чарăнура анса юлмалла/.

***Ольга ФЕДОРОВА,***
***жюри членĕ.***

**Вĕреннĕ çын вĕренерен те хурама тăвĕ.**

Тантăш
чăваш ачисен хаçачĕ

● УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви; Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин «Хыпар» Издательство çурчĕ» Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ.

● ХАÇАТ ИНДЕКСĔ:
54802 - (çур çула) - Чăваш Республикинче,
11466 - республика тулашĕнче.

● Редакципе издатель адресĕ:
428019, Чăваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.

● "Хыпар" Издательство çурчĕ" АУ техника центрĕнче калăпланă. "Чувашия" ИПК" ПУП типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Чăваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.

● "ЧУВАШИЯ" ИПК" ДИРЕКТОРĔ:
Тел.: 56-00-23

● ДИРЕКТОР - ТĔП РЕДАКТОРШĂН
М.М.АРЛАНОВ

● ТЕЛЕФОНСЕМ
директор-тĕп редактор: 56-00-67
редактор, çырусемпе
тата юнкорсемпе ĕçлекен пай: 28-83-86
шкул ачисен пайĕ: 28-85-69
спорт тата экологи пайĕ: 56-11-80
право, кăмăл-сипет пайĕ: 28-83-89
факс: (8352) 56-15-30
бухгалтери: 28-83-64

● РЕДАКТОР
В.ФЕДОРОВ

● НОМЕР ВУЛАВÇИ
Л.ВАСИЛЬЕВА

● КАЛĂПЛАВÇĂ
Н.ПЕТРОВА

● ЭЛЕКТРОН АДРЕС:
e-mail: tantas@list.ru

● ТИРАЖ
1233 экз.

● ЗАКАЗ
№ 4190
Пичете октябрь уйăхĕн 28-мĕшĕнче алă пуснă.

● ПИРĔН САЙТ:
www.hypar.ru

Газета «Тантăш» («Ровесник») зарегистрирована Управлением Федеральной службы по надзору в сфере связи, информационных технологий и массовых коммуникаций (Роскомнадзор) – свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ТУ21-00306 от 10.12.13 г.

Ⓟ паллăпа реклама материалĕсене палăртнă

Пичете графикпа 15 сехетре алă пусмалла, 14 сехет те 00 минутра алă пуснă.

**ПĔР ШКУЛТАН – ИКĔ ХЫПАР**

## Кĕрхи вăрманта



Кĕçĕн классенче вĕренекенсем анчахрах кĕрхи вăрманта «экскурсире» пулчĕç. Çулçӳреве шкул директорĕн воспитани енĕпе ĕçлекен заместителĕ Оксана Алексеевна Гурьянова йĕркелерĕ, вăлах ертсе пычĕ. Командăсем ултă ачаран тăраççĕ. Кашнин хăйĕн девизĕ, ячĕ, эмблеми. Эпир вара ятарлă тум та хатĕрлерĕмĕр. Вăрманта ачасем хăйсене мĕнле тытмаллине манмарĕç. Ятарлă правилăсене пĕлмесĕр çулçӳревре ниепле те май çук. Командăсем вăрманта кăмпа та пуçтарчĕç, тупмалли юмахсен тупсăмĕсене шырарĕç, шыв кӳлленчĕкĕсем урлă тĕмескесем хурса та каçрĕç… Кĕрхи чечек çыххисем вара кашнин хăйне май хитре те асамлă пулчĕç. Эсир пахчара хăвăр тăрăшса çитĕнтернĕ çимĕçсен ячĕсене куç хупса, алăпа кăна хыпашласа тĕрĕс калама пултаратăр-и? Пирĕн шкулти кĕçĕн класс ачисем вара тĕрĕс пĕлеççĕ. Хальхинче те вĕсем ку тĕлĕшпе палăрчĕç. Мĕнле кăна конкурс иртмерĕ-ши? Кашнинчех çулçӳревçĕсем палăрчĕç, хăйсен пултарулăхне аван кăтартрĕç. Куракансем те кĕçĕннисемпе кăмăллă юлчĕç.

Кашни класс тĕрлĕ номинацире палăрчĕ те çĕнтерчĕ. Эпир, виççĕмĕшсем, «Чи хăйне евĕрлĕ класс» номинацие тивĕçрĕмĕр.

***Софья ГРИГОРЬЕВА, 3 класс.***

**САНӲКЕРЧĔКРЕ:** эпир – çĕнтерӳçĕсем!

## Асаннене парне — «5» паллă!



Нумай ырă енпе палăрать манăн асанне Зоя Даниловна Петрова. Ырă та таса чунлăскер хамăр районти Çатра Марка ялĕнче пысăк кил-йышра çуралса ӳснĕ. Çемьере ултă ача çитĕннĕ. Асанне мĕн пĕчĕкрен ĕçе юратнă. Вăл тума пĕлменни çук та пулĕ. Çитĕнсенех тăван «Слава» хуçалăхра тăрăшма тытăннă. Ĕне ферминче дояркăра тăрăшаканскер совхоз ертӳçисенчен пĕрре çеç мар ырă сăмаха илтнĕ. Вăтăр çичĕ çул асанне хăй юратнă ĕçĕнче тăрăшса тивĕçлĕ канăва тухнă.

Эпĕ асаннене çемçе кăмăлĕшĕн, ĕçре хастар та пултаруллă пулнăшăн питĕ юрататăп. Ялта та ăна хисеплеççĕ. Çамрăксем канаш ыйтма пырсассăн хам та хĕпĕртетĕп – вĕсен асаннерен вĕренмелли пурри мана та савăнтарать-çке.

Паян манăн чи пĕрремĕш тивĕç – шкулта лайăх вĕренесси. Эпĕ «5» паллă илни юратнă çыншăн чи хаклă парнесенчен пĕри шутланать. Унсăр пуçне асаннене тĕрлĕ ĕç тума пулăшасшăн.

***Катя ПЕТРОВА, 5 класс.***

Шупашкар районĕ,
Ишек шкулĕ.

**САНӲКЕРЧĔКРЕ:** манăн юратнă асанне.

## ĂШĂ САЛАМСЕМ

СМС САЛАМСЕНЕ ПĔЛТЕРМЕЛЛИ НОМЕР:
89051975911

Патăрьел районĕнчи Чăваш Сăкăтĕнче пурăнакан, садикре ĕçлекен воспитательница, манăн юратнă кума **Светлана Витальевна КАЛЕНОВА** паян хăйĕн 45 çулхи юбилейне паллă тăвать. Ашшĕпе амăшĕ, мĕн пур тăванĕ ăна юбилейпе чĕререн саламлатпăр. Хурçă пек çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул, кулленех ăнăçу, юрату, телей сунатпăр.

***Тăванĕсем.***

Элĕк районĕ,
Мăн Карачура ялĕ.

✧ ✧ ✧

Çитес кунсенче юратнă юрăç-композитор, илемлĕ юррисемпе тата çепĕç сассипе тыткăнлакан **Надежда ЗАВОДСКОВА** черетлĕ çуралнă кунне паллă тăвать. Эпир унăн юррисене Наци радиовĕпе талăкĕпех итлесе савăнатпăр. Чĕререн çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул, кунсерен хавхалану туйăмĕ, ăнăçу сунатпăр. Телейлĕ пулăр, хаклă Надежда Ивановна!

***Радио итлекенсем.***

Элĕк районĕ,
Мăн Карачура.

✧ ✧ ✧



Çĕмĕрле районĕнчи Хутар ялĕнче пурăнакан юратнă куккана **Сергей Валерьевич ВЛАСОВА** 45 çул тултарнă ятпа чунчĕререн саламлатпăр. Ăна иксĕлми телей, çирĕп сывлăх, юратупа ăнăçу, вăрăм кун-çул сунатпăр. Эпир сана пурте хисеплетпĕр, эсĕ пурришĕн чунтан савăнатпăр.

***Анатолий Шабалов,***
***Любовь Карасева,***
***тăванĕсем.***

Çĕмĕрле районĕ,
Çĕмĕрле хули, 3-мĕш шкул.

✧ ✧ ✧

Вăрманкас ялĕнчи /Çĕмĕрле районĕ/ **Владимир Федорович РАФИНОВА** çуралнă кунĕ ячĕпе саламласа чăваш сурпанĕ пек вăрăм ĕмĕр, юман пек çирĕп сывлăх, çăка пек çемçе кăмăл сунатпăр. Нихăçан та ан чирле. Телейлĕ пул.

***Ивановсем, Карасевсем, Шабаловсем.***

Çĕмĕрле районĕ.

✧ ✧ ✧

Çĕмĕрле районĕнчи Вăрманкасра çуралса ӳснĕ **Юрий Никифорович ИВАНОВА, Николай Борисович ВАНЕЕВА, Ирина Валерьевна ЗАХАРОВĂНА** çуралнă кунĕсен ячĕпе саламласа ырлăх та телей, савăнăçлă та вăрăм кун-çул, хаваслăх сунатпăр. Ан чирлĕр, савăнса пурăнмалла пултăр.

***Ял-йыш, тăванĕсем, кӳршисем,***
***пĕрле вĕреннĕ тус-юлташĕ.***

**ЮБИЛЕЙ**

## *Литература музейĕ – 75 çулта*

К. Иванов ячĕпе хисепленекен литература музейĕ 75 çул тултарчĕ. Уява халалланă мероприятие республикăн паллă çыннисем: ЧР культура министрĕ, писательсемпе поэтсем, учительсемпе вĕренекенсем, музей ĕçченĕсем, фольклор ушкăнĕсем йышлăн пухăнчĕç. Музей ертӳçи Ирина Вячеславовна Оленкина хăнасене питĕ тарават кĕтсе илчĕ.

Валери Туркай, Юлия Силэм, Раиса Сарпи тата ытти паллă çыравçăсем сцена çине тухса музей ĕçченĕсене саламларĕç.

Фольклор ушкăнĕсемпе музей ĕçченĕсем те парăмра юлмарĕç – уява илемлĕ юрăсем шăрантарса пуянлатрĕç.

Уйрăмах куракансене Шупашкарти 2-мĕш шкулта вĕренекенсем – Матвей Капитоновпа Юлиана Рубцова «Нарспи» поэмăри сыпăксене илемлĕ, палăртуллă вулани тыткăнларĕ. Юлиана «Талли-талли сар пурçăн» чăваш халăх юррине шăрантарнă чухне пухăннисем тăвăллăн алă çупса тав турĕç. Чăваш халăх поэчĕ Валери Туркай çамрăк юрăçа ырă сунса хăйĕн кĕнекине парнелерĕ.

***Роза ОСИПОВА,***
***вĕрентекен.***

Шупашкар,
2-мĕш шкул.



*Çула тухсан юлташу хăвăнтан аван пултăр.*

# Пĕр партăра ларакан Юльăпа Алеша



Урамри илемлĕхе кантăкран кăмăлтан пăхса тăчĕ Юля Герасимова. Акă йывăç çинчи шăннă çулçăсем пĕрин хыççăн тепри çĕр çине ÿкрĕç... Унччен те пулмарĕ, такам хыçалтан пырса унăн куçĕсене аллипе хупларĕ.

– Ай-уй! – терĕ Юля. – Кам-ши ку?

Чĕнекен пулмарĕ. Апла ăçтан чухлама пултарăн? Кĕçех тахăшĕ ахăлтатса илчĕ.

– Никита Серафимов! – терĕ хĕрача.

– Пĕлеймерĕн!

– Эх, пĕр пĕр парта хушшинче ларакан аллине те сисеймерĕн иккен, – пăшăрханнăн калаçрĕ куç хуплаканĕ, аллине Юльăн куçĕсенчен сирсе.

Çаврăнса пăхрĕ те хăй умĕнче Алеша Сазонова курах кайрĕ.

– Эсĕ-çке ку, Алеша! – тесе хавассăн чĕвĕлтетрĕ.

Юльăпа Алеша Кÿлпуç ялĕнчен, пĕр парта хушшинче лараççĕ. Иккĕшĕн те тавра курăмĕ анлă. Аçын ача яланах кама тăр пулăшас тесе шутласа-ĕмĕтленсе çÿрет. Пĕр кунхине тăхтавра Виталина Геннадьевна Митрофанова педагог патне пырса тăчĕ те сăмах çăмхине сÿтме те тытăнчĕ.

– Виталина Геннадьевна, хăçан пысăкланăп-ши эпĕ? Пĕлетĕр-и, алла професси илсенех Сире çăмăллăх пулĕ. Кирек ăçта та пулăшăп, чĕнме çеç ан манăр. Сире пулăшас шухăш аттепе тракторпа çÿренĕ самантра çуралчĕ. Ара, килте техника пулмасан пахча ĕçĕсене епле пурнăçламалла-ха? Акă хам руль умне ларма тытăнсанах пахча та сухаласа парăп. Утă турттарăп. Ан пăшăрханăр, вăйлă çын пулăп эп ун чухне, – хăй шухăшне хăпартланса пĕлтерчĕ пĕрремĕш класс вĕренекенĕ.

Йăл кулчĕ Виталина Геннадьевна.

– Тавах, Алеша, тавах. Халех ырă кăмăллă эсĕ, маттур. Мана пахча сухаласа парсан та çитĕ. Ĕне тавраш çук та, утă турттарма кирлех мар, – терĕ хастар учитель вĕренекенĕ çине ăшшăн пăхса.

– Виталина Геннадьевна, Сирĕн ĕне çук-и? Ан пăшăрханăр, ăна та парнелĕп. Анчах хальлĕхе пирĕн пăру пĕчĕкрех-ха, акă ÿсĕ те вăл пире хитре пăрупа савăнтарĕ. Хайхискере çитĕнсен сирĕн картише çавăтса пырăп. Тутлă сĕтпе хăпартлантарĕ кашни кунах. Кун пек чухне пурнăç тата хитререх пулать, – терĕ арçын ача.

Вĕсен калаçăвне итлесе ларнă май, шурă хут çине тăрăшса ÿкерекен Юля пуçне ялтах çĕклерĕ.

– Манăн та Алеша пекех пурнăçа хитре енчен çеç курас килет. Виталина Геннадьевна, пире хамăр пÿлĕме ÿкерме хушнăччĕ. Ÿкерсе пĕтертĕм-ха, анчах каярах тарăн шухăша путрăм. Класри доска симĕс, стена кăвакпа шурă, чечексем симĕс... Манăн вара урăхларах курас килчĕ пÿлĕме, çавăнпа ÿкерчĕкри ĕçе асамат кĕперĕн тĕсĕсемпе илемлетрĕм. Çеçкесем симĕссисем кăна мар, хĕрлисем, саррисем, шуррисем, кăваккисем те пулаççĕ-çке. Кун пек, чăн та, чунра хаваслăх хуçаланать, – палăртрĕ хастар хĕрача хăй ĕçне вĕрентекен патне йăтса пынă май.

...Урок ларнине систерсе шăнкăрав янăрарĕ. Пĕрремĕшсем, улттăн, васкаса парта хушшине вырнаçрĕç. Çĕнĕ темăна ăша хывас тесе педагогăн кашни сăмахне тимлĕн итлерĕç.

# Пĕртăван Лазизпа Анфиса

Лазизпа Анфиса Красновсем Узбекистанран куçса килнĕ. Улттăри хĕрачапа çиччĕри арçын ача чăвашла тĕшмĕртеççĕ ĕнтĕ, анчах мĕн ыйтнине амăшĕн чĕлхипе хуравлаймаççĕ.

– Паллах, калаçас килет чăвашла. Вĕренсен вулама та юлхавланман пулăттăмăр, – çирĕплетеççĕ пĕртăвансем.

Анфиса сăпайлă. Сăмаха виççе, пĕлсе калаçать. Кирек епле ыйту парсан та сарă хĕвел пек йăл! кулать. Ăшăлăх тапса тăрать унра.

Лазиз – лара-тăма пĕлменскер. Арçын ача темерĕн, техника çинчен сăмах тапратсан калаçăва хаваспах хутшăнать.

...Физкультура урокĕ. Ачасем икĕ ушкăна пайланнă та савăнсах футболла выляççĕ. Лазиз вăр-варах çав. Мечĕке кирек камран та туртса илсе хапха еннелле вирхĕнет. Унăн хастарлăхне пăхса савăнчĕ Анфиса. Пиччĕшне кура вăл та пĕр вырăнта тăмарĕ. Çăмха хыççăн тарла-тарла чупрĕ.



Акă шăнкărав сасси янăраса та кайрĕ. Унăн вăрăм та асамлă янăравĕ кашни ачана вырăнтан хускатрĕ. Çирĕп йĕрке тытакан вĕрентекен пекех пĕр тăхтаса тăмасăр класа кĕме хистерĕ. Вăйă-кулăран пĕлÿ тĕнчине кĕме йыхравларĕ.

– Лазиз, çитес урокра хапхана ытларах та ытларах мечĕк тапса кĕртесчĕ, эпĕ сана ун чухне пĕтĕм вăйран пулăшăп. Ушкăнрисем те айккинче пăхса тăмĕç. Ара, çитĕнÿ тума пĕччен йывăр, нумаййăн чухне çеç çĕнтерĕве çывхартма çăмăл, – терĕ Анфиса пиччĕшне хавхалантарнă май.

Туслă ачасем пĕр-пĕрне пÿлсе калаçнă май, пÿлĕмелле васкарĕç.

# «Пуласчĕ çар çынни!»

Вуннăмĕш класра вĕренекен Дима Волков Çирĕклĕ Шăхаль шкулĕнче пĕрремĕш çул пĕлÿ илет.



– Класра вуннăн эпир:ултă хĕрачапа тăватă арçын ача. Шкулта вара çитмĕл ытла ача. Питĕ сахал ку. Аттепе анне вăхăтĕнче пĕр ушкăнра 30 ача ытла вĕреннĕ вĕт-ха. Апла пулсан унччен хи икĕ класс паянхипе – пĕр шкул. Çак пулăм кашнин чунне ыраттарать паллах, – тет каччă.

Вĕренÿ отличникĕ тăхăр класс хыççăн хулана каяс ĕмĕтлĕ пулнă. Анчах тăванĕсен сăмахĕсем ăна çав шухăша пăрахăçлаттарнă.

– Пур предметпа та «5» паллăпа ĕлкĕрсе пыратăн та, мĕншĕн тăван килтен каймалла? Çар çынни пулас ĕмĕт самантрах кĕлленет-им тата? – тенĕ пĕри те тепри ăна ыррине çеç суннă май.

Чăн та, çиччĕмĕш класра вĕреннĕ чухне вĕсен шкулĕнче пĕр офицерпа тĕлпулу иртнĕ. Ун чухне вăл мĕн каланине ăша хывнă, çар тумĕ те кăмăла кайнă Димăна. Шăп çавăн чухне офицер пулас ĕмĕт çуралнă та унра. Авă, паян та çав шухăш пуçрах.

– Тĕрĕссипе, патшалăхăн пĕрлĕхлĕ экзаменĕ шиклентерет. Халех килес çулхи пирки пăшăрханатăп. Экзаменра пит хĕретес марччĕ, пысăк бал пуçтарса курсант пуласси – çутă ĕмĕтсенчен пĕри. Çапах та ют шкула килес умĕн чунра канăçсăрччĕ. Вĕрентекенĕсемпе ачасем еплерех йышăнĕç-ши тесе пĕрре мар пăшăрханнă. Кулянни ахалех пулнă иккен. Кунти педагогсем те ырă кăмăллă та тараватиккен, йывăр вăхăтра сĕнÿ-канаш пама та ÿркенмеççĕ, – пĕлтерчĕ хăй шухăшне хастар йĕкĕт.

Спортра та хастар Хăвăлçырма яшĕ. Акă, авăн уйăхĕнче Йĕпреçре иртнĕ республикăри çăмăл атлетсен ăмăртăвĕнче виççĕмĕш вырăна тухнă.

– Çакă мана питĕ çунатлантарчĕ. Ара, çар çынни пулас тесен спортра чи малтан хăвна кăтартмалла-çке. Çĕнтерÿçĕсен йышĕнчисене пушшех кăмăлланине те пĕлетĕп. Асанне те хăпартлантарать мана. Сăвва-юрра юратаканскер: «Дима, яланхиллех вĕренÿ çине пысăк тимлĕх уйăрмалла. Аслă шкула кĕресси çăмăл мар. Унта вара, хăвах пĕлетĕн, çирĕп пĕлÿллисем çеç лекеççĕ. Вĕренни нихăçан та çăкăр ыйтмасть тесе ахальтен каламан ватăсем. Эсĕ те çак ылтăн сăмахсене яланах асра тыт», – тет. Чăнах, унăн сăмахĕсене яланах ăша хыватăп. Тăтăш çапла ăслă калаçать çав юратнă асаннем, – хăпартланать çамрăк.

***Луиза ВАСИЛЬЕВА.***

Елчĕк районĕ,
Çирĕклĕ Шăхаль.

АКĂ ЭПИР: ПАЛЛАШĂР, ТАРХАСШĂН!

# Кадетсем – маттурсем!




**Чылай çул «Букварьтен – литературăна çити» конкурса ертсе пынă Геронтий Никифоровпа нумаях пулмасть Шупашкарти 47-мĕш шкула кĕрсе тухрăмăр. «Тантăш» хаçатпа туслă хăнасем килсе çитнине пĕлсен пире çак шкулти 5-мĕш класра вĕренекен кадетсем тыткăна илчĕç тесех йышăнмалла. Вĕсен пур енĕпе те пултаруллă класĕ çинчен Чăваш Республикинчи ытти шкулсенче мĕншĕн халĕ те пĕлмеççĕ тесе ыйтрĕç кирлĕ таран чăрсăр вĕренекенсем. Хайсен çинчен хăйсемех çырса памалла тесе сăмах татрăмăр вара ачасемпе. Сăмахне тытрĕç маттурсем, тĕрленчĕкĕсене редакцие çитерчĕç. Тусăмăрсем! 47-мĕш шкулта вĕренекен хастарсемпе паллашăр!**

**Анастасия ПЕТРОВА:**

– Пирĕн 5-мĕш «К» кадет класĕ – хулипе кăна мар, тĕнчипе чи лайăххи те пархатарли. Питĕ туслă та пĕр тĕллевлĕ эпир. Пирĕн класра вăтăр вĕренекен, вунă хĕрача тата çирĕм арçын ача. Эпир пĕр пек те, çав вăхăтрах тĕрлĕрен те. Кашнин хăйĕн юратнă ĕçĕ, кăмăла кайни, йăли пур. Класс вара пурне те пĕр тĕвве чăмăртать, тăрăшса вĕренме, йĕркеллĕ пулма хистет.

Класс командирне эпир Максим Ларионова, старостăна Андрей Прокопьева, старостăна пулăшакана Софья Михайловăна суйларăмăр. Вĕсем хăйсен яваплăхне лайăх ăнланаççĕ, дисциплина пирки самантлăха та манмаççĕ.

Тĕнчери чи туслă класăн ертӳçи те, паллах, тĕнчери чи чаплă вĕрентекен. Хаваслă та уçă кăмăллă Антонина Геннадьевна Петрова пире яланах пулăшать, вăл анне выранĕнчех. Унран ырăлăх тапса тăнине кашни ача чунĕпе туять. Мĕнле те пулин ĕç сиксе тухсан эпир Антонина Геннадьевнăпа уроксем хыççăн та хаваспах юлатпăр. Унăн ĕçченлĕхĕ пире хавхалантарать.

Уроксенче кичеммĕн лармастпăр эпир. Кашни самантра кăсăклине, çĕннине, усăллине пĕлетпĕр. Уроксем хыççăн ачасем кружоксене, секцисене саланаççĕ. Пĕрисем самбо мелĕсемпе кĕрешеççĕ, теприсене хореографи илĕртет, виççĕмĕшĕсем шывра ишсе ăмăртаççĕ, хĕç-пăшалтан пеме вĕренекенсем те тупăнаççĕ, стройпа утма хăнăхас текенсем те çителĕклех, аэроклуба çӳрекенсем те пур. Пирĕн класс спорт ăмăртăвĕсене, предмет олимпиадисене хастаррăн хутшăнать, çĕнтерӳсемпе палăрать.

Хамăрăн класа эпĕ питĕ юрататăп. Малашне те эпир çавăн пекех чăтма çук туслă та хаваслă, питĕ йĕркеллĕ пуласса, шав малалла ăнтăласса шанатăп.

**Никита МИХАЙЛОВ:**

– Пирĕн класра ăслă та хаваслă, хăюллă та патвар, туслă та хастар ачасем вĕренеççĕ. Кадет форми мĕне тăрать тата! Пурте ăна тăхăнса çӳреме юратаççĕ. Класс ертӳçи те питĕ маттур пирĕн. Вăл хитре, ырă кăмăллă. Антонина Геннадьевна пирĕн ертӳçĕ пулнишĕн пурте чĕререн савăнатпăр. Класс командирĕ те питĕ маттур. Максим Ларионов – арçын ачасенчен чи хăюлли. Чăн-чăн командир вăл, пире яланах пулăшать.

**Евгения ШИШКОВА:**

– Пирĕн класс чи позитивли, тусли. Хамăр пĕчĕккĕ пулин те 1-4-мĕш классенче вĕренекенсемшĕн тĕслĕх эпир. Вăхăт çитсен, тен, вĕсем те кадетсем пулĕç. Çавăн пек ĕмĕтленеççĕ кĕçĕнрех классенче вĕренекенсем.

Эпир тăрăшса вĕренетпĕр. Ударниксем те, отличниксем те пур. Хăш чухне уроксем нумай пулаççĕ, çапах эпир аптрамастпăр, пуça усмастпăр. Пур йывăрлăха та çĕнтерет пирĕн туслă класс. Мĕншĕн тесен эпир пысăк саспаллирен пуçланакан Кадетсем!

**Влада АФАНАСЬЕВА:**

– Тем каласассăн та, пирĕн класс ачисем ыттисенчен уйрăлса тăраççĕ. Туслăрах, мал утăмлăрах, хаваслăрах, хастартарах вĕсем. Тата эпир – кадетсем: шкулта çар тумĕпе çӳретпĕр. Çирĕппĕн утса та пуçа каçăртса тесен те çылăх мар. Вĕренӳре пурте маттур, иккĕмĕш ют чĕлхе те вĕренме тытăнтăмăр, кăшт тăрсан «Тантăша» французла тĕрленчĕк те çырса ярăпăр-и, тен!

Çитĕнӳсем пирки каласа памасăр чун чăтмасть. Çул-йĕр правилисене мĕнле пĕлнине тĕрĕслеме республика шайĕнче ирттерекен конкурсра 2-мĕш вырăна тивĕçрĕмĕр. Хамăр шкулти 5-мĕш классем хушшинче йĕркелекен «Анне, атте тата эпĕ – спортпа туслă çемье» тупăшура вара чи мала тухрăмăр. Юпа уйăхĕн 30-мĕшĕнче пирĕн питĕ яваплă кун – присяга йышăнатпăр, кадет пулма тупа тăватпăр. Кадет класĕнче вĕренни питĕ пысăк чыс. Мухтанатăп хамăрăн класпа.

**Валерия УСПЕНСКАЯ:**

– Пирĕн класс пек тусли тата хавасли тек ниçта та çук. Ачасем пурте тăрăшуллă та ырă кăмăллă. Пĕр-пĕрне кӳрентерместпĕр эпир, вĕренӳре яланах пулăшса пыратпăр. Уроксем хыççăн та тăтăшах пĕрле, нимĕнле ĕçрен те ӳркенместпĕр – кадет ятне ямастпăр.

Класс ертӳçи Антонина Геннадьевна Петрова ырă тĕслĕхĕпе кăмăла хавхалантарать. Питĕ ăслă та ĕçчен вăл. Антонина Геннадьевна пирĕншĕн ĕмĕр тăршшĕпе вĕренмелли тĕслĕх. Тăван ачисем вырăннех хурать пире, чунне парса тăрăшать. Тавтапуç ăна!

Çакăн пек тĕрленчĕксемпе савăнтарчĕç пире ырми-канми 5-мĕшсем. Тусăмăрсем, хăвăрăн класăрпа паллаштарас кăмăл çук-и сирĕн? Çырусем кĕтетпĕр!

*Владимир СТЕПАНОВ.*

ПРЕЗЕНТАЦИ

# Ăсталăх урокĕсем: çĕнĕлĕх, хăйне евĕрлĕх, кăткăслăх



*Тăван чĕлхемĕр, ĕмĕр сывă пул!*
*Эпир çĕрте çĕрсен те эсĕ юл.*
*Анне чĕлхи, эс тăванран тăван!*
*Санран та çывăххи кам пур-ши ман?*

Çак сăвă йĕркисене вуланинчен пуçланчĕ те нумай пулмасть ЧР вĕренӳ институтĕнче иртнĕ тăван чĕлхепе вырăс чĕлхи учителĕсен ăсталăх урокĕсен Пĕтĕм Раççейри фестивалĕ.

Унăн тĕп тĕллевĕ – тăван чĕлхе вĕрентекенĕн профессийĕн хисепне тата ачасен пĕлӳ туртăмне ӳстересси.

Фестиваль кăçал саккăрмĕш хут иртрĕ. Пĕрремĕш тапхăрта вĕрентекенсем Раççей субьекчĕсенче пухăнаççĕ, çĕнтерӳçĕсем вара Мускавра ăмăртаççĕ.

Кăçал ăсталăх урокĕсем Шупашкарта, Питĕрте, Саранскра тата Нальчикре пулчĕç.

Тĕп хуламăрта хăйсен ĕçĕсене 2012 çулти çĕнтерӳçĕ Муркаш районĕнчи Калайкасси шкулĕнче чăваш чĕлхипе литература вĕрентекен Александр Марсович Степанов, 2010 çулти çĕнтерӳçĕ Алена Андреевна Ядрицова кăтартрĕç. Кăçал Мускава кайма тивĕçнĕ Светлана Вячеславовна Тяхмусова /Шупашкар 43-мĕш шкул/, Валентина Павловна Ефимова /Куславкка, 3-мĕш шкул/ тата Валентина Михайловна Иванова /Канаш районĕ, Сухайкасси шкулĕ/ те пухăннисене хăйсен урокĕсемпе паллаштарчĕç.

Презентаци хăйне евĕрлĕ те интереслĕ, çĕнĕ шухăшсенчен пуян пулмалла. Унсăр пуçне вăл вĕренекенĕн фантазипе пултарулăхне аталантарма пулăшмалла, ăна урока хавхаланса та çĕкленӳллĕ хатĕрленме, хутшăнма хистемелле.

Кашни урок тĕрлĕрен иртрĕ, тематики те вĕсен расна пулчĕ. Сăмахран, Александр Марсович хăйĕн презентацийĕнче çутçанталăка хӳтĕлесси, хисеплесси пирки калаçрĕ, çак темăпа çырнă сăвăкалавпа усă курса урока пуянлатрĕ. Усăмлă та витĕмлĕ сăмахсем никама та айккинче хăвармарĕç, пурне те калаçăва хутшăнма хистерĕç.

– Пирĕн тĕп тĕллев вăл – вĕрентĕве интереслĕ меслетсемпе йĕркелесси, урока тĕрлĕ мел кĕртсе ачасене тăван чĕлхепе тата культурăпа кăсăклантарма хавхалантарасси, ăна юратма вĕрентесси, унран писме парас марри. Тĕслĕхрен, урокра тренинг мелĕсемпе информаципе коммуникаци технологийĕсене кĕртни, критикăлла шухăшлав технологийĕпе усă курма май пани вĕренме пулăшать кăна мар, кăсăкланăва та ӳстерет, – палăртрĕ учитель.

Тĕрĕк ушкăнне кĕрекен чĕлхесене вĕрентекенсен Пушкăртстан, Тутарстан, Хакас тата Тыва республикисенчен ярса панă видеоуроксене курма та май пулчĕ. Педагогсем уроксене тĕрлĕ мелпе пуянлатнине кăтартрĕç çеç мар, пĕр-пĕрин опычĕпе те паллашрĕç. Çакă вĕсене юратнă ĕçре çĕнĕлĕхсемпе усă курма пулăшĕ.

*Нина ЦАРЫГИНА.*

**Ăсталăх пĕлекен çын çăкăрсăр лармасть.**

ÇĔНĔ КĔНЕКЕ

# «ПĔЧĔК ЧӲРЕЧЕЛЛĔ ПӲРТ» те çуталса кайĕ...




«Ученайсем темĕн те пĕр шухăшласа кăларасçĕ, йăлт тĕпчесçĕ. Шел, вăхăт машинине вара халĕ те ăсласа тупаймасçĕ. Эх, мĕн тери аван пулĕччĕ! Рыцарьсен ĕмĕрне çитсе курăттăм», – тенĕччĕ пĕррехинче юлташăм. Ун чухне эпĕ ăна нимех те калаймарăм. Ара, мана хамăр пурăнакан ĕмĕр те çырлахтарать те, унашкал ĕмĕтпе тĕмсĕлмен. Ĕнерхи кунччен... Пач кĕтмен çĕртен вăхăт машинине тĕл пуличчен...

Вĕр çĕнĕ те илемлĕскер çул çӳреве йыхравларĕ. Эпĕ хаваспах килĕшрĕм. Вара тепĕр самантранах ачалăх тĕнчине путрăм...

Ахăртнех, ку юмах юптарать тетĕр. Пĕртте апла мар. Сăмахăм нумай пулмасть Чăваш кĕнеке издательствинче кун çути курнă «Пĕчĕк чӳречеллĕ пӳрт» /редакторĕ – Галина Антонова, ӳнерçи – Иван Алексеев/ кĕнеке çинчен пырать. 1000 экземплярлă тиражпа тухнă кăларăм авторĕ – Александр Миллин /1927–1978/. Александр Георгиевич – журналист, писатель, куçаруçă. Вăл Елчĕк районĕнчи Патреккел ялĕнче çуралса ӳснĕ. Тĕрлĕ жанрпа çырнă хайлавĕсене республикăра тухса тăракан хаçат-журналта пичетленĕ. Çыравçăн яш-кĕрĕме халалланă произведенисем те сахал мар. «Пĕчĕк чӳречеллĕ пӳрт» – А.Миллинăн ачасем валли кăларнă виççĕмĕш кĕнеки. Малтанхисем «Вăлта» /1979/ тата «Мухтанчăк» /2014/ ятсемпе кун çути курнă.

Çыравçăн çĕнĕ кĕнекине калавсемпе шӳтсем, юмахсем, кĕске пьесăсемпе сценкăсем кĕнĕ. Вĕсене кĕçĕн тата вăтам шкул ӳсĕмĕнчи ачасене валли çырнă. Автор ачапча кăмăл-туйăмне уçса пама ăста. Вĕсене куç умне кăларса тăратмалла сăнлать. Арçын ачасемпе хĕр пĕрчисене мĕн хумхантарнине пит аван пĕлет вăл. «Хĕл Мучи килсен» калаври пĕр сыпăка илсе пăхар: «Хĕлле темшĕн çапла эпĕ: ыйхăран вăрансан та тăруках тăрас килмест. Çулла апла мар-çке. Тăхăр сехетре кирек хăçан та хамах вăранатăп. Паян та акă ăшă утиял айĕнче чылайччен йăваланса выртрăм. Пастай! Эпĕ ĕнер хоккей шайбине ăçта хунă-ши? Конькие ăçта хунине те манса кайнă. Çамкана темĕнччен пĕркелерĕм, пурпĕр аса илеймерĕм».

Тĕп сăнар мĕн шухăшланине, мĕн ĕçленине йĕрлесе пыма çав тери интереслĕ. Арçын ача Раштав сиввине урамах тухса пăхма шут тытать. Лешĕ таçта пăраххса каяссинчен шиклент-çке-ха шĕвĕркке.

«Трактор çăмарти» калаври Шурика та ăш пиллĕ кулă парнелемесĕр епле чăтăн? Аслисем ятласан та, ӳкĕтлесен те çăмарта çимест вăл. Мĕншĕн тетĕр-и? Акă мĕн калать кун пирки Шурик: «Ахаль пулсан çиеп те пуль, чăх пуласран хăратăп. Сивĕре те, çумăрта та тулта пулас килет-и-ха? Чаш-ш! тулă сапса парасçĕ те – çӳре вара сăхса. Çывăрма та каштана лармалла. Ӳксен?..» Вăт, трактор çăмартине хаваспах çиййĕччĕ вăл. Ывăлĕн ку сăмахĕсене ĕçе пуçтарăнакан ашшĕ те илтет, амăшĕ çав хушăра кил хуçин сумкине ултă çăмарта хурать. Каçпа вара шăпах «трактор çăмарти» илсе таврăнать ашшĕ. Арçын ача ăна тăварпа пуçсах, кулачпа çыртсах çиет. «Ах, тутлă пулчĕ-çке. Чăх çăмарти аякра тăтăр», – тет Шурик кăмăллăн.

Тĕрĕссипе, мана пĕрремĕш калавах /«Кайăк ларман йывăç илемсĕр»/ кăсăклантарса ячĕ. Миша Уткинсен пилешĕ çине кайăксем иленмесçĕ-мĕн. Мĕншĕнне юлташне те каласшăн мар вăл, уншăн япала пама ыйтать. Тĕрĕслĕхĕ хайлав вĕçĕнче тин уçăлать. Маншăн та интереслĕ пулчĕ ку, халиччен илтменнине пĕлтерчĕ автор. Анчах пĕтĕм вăрттăнлăха уçса памăп сире. Кĕнекене тупса вуласассăн йăлтах ăнланăр. Тен, ахаль те тавçăрса илтĕр пуль. Эсир маттур вĕт-ха, тантăшăмăрсем.

Хайлавсемпе паллашнă май епле тĕлĕнмесĕр, савăнмасăр тăрăн-ха? Вĕсенчи тĕп геройсем – ял ачисем – вăйă валли кăна мар, вĕренӳпе ĕç валли те вăхăт тупасçĕ, туслăха упрама пĕлесçĕ, сынлăха мала хурасçĕ. Пĕчĕкренех хастар, ĕçчен, тавçăрулла та вăр-вар ку шăпăрлансем. Тĕслĕхрен, «Сарă пĕсехе» калаври Коля кăсăйна хĕлхехи шартлама сивĕре шăнса та выçса вилессинчен хăтарать. Вĕсен кайăксем те тав тума пĕлесçĕ. Пĕчĕк кăсăя Кольăсен чӳречинчен шак-шак! шаккать, çăлавça манманни çинчен хыпарлать. Хĕнĕртенĕ арçын ача сырăш çакса парать. Апатланмăша ытти кайăксем те килме пуçласçĕ.

«Пĕчĕк чӳречеллĕ пӳрт» калаври ачасен пархатарлă ĕçĕ те чунра ырă туйăмсем вăратать. Пĕчĕк кăна хайлавра чылай ыйту хускатнă çыравçă. Тимуровецсем пĕччен пурăнакан Униççе асаннене пулăшасçĕ. Ĕлĕкрех пĕччен пулман-ха вăл. «Упăшкипе аслă ывăлĕ вăрçă хирĕнче пуç хунă. Виçĕ хĕрĕ качча кайса çемьеллĕ пулнă. Пурте – аякра». Хурланмалла йывăр. Хĕрарăм миçе ачине ура çине тăратнă, ватлăх кунĕнче вара ăна пăхакан та çук... Юрать-ха, шкул ачисем манмасçĕ кинемие. Ырă кăмăллă çынсем пур чухне пĕчĕк чӳречеллĕ пӳрт те çуталса кайĕ, унăн мăриинчен те тĕтĕм тухĕ-ха.

Юмахсенчи тĕп сăнарсем – чĕр чунсем, вылььăх-чĕрлĕх, вĕçен кайăк, хурт-кăпшанкă, ӳсен-тăран т.ыт.те. Тыткаларăшĕпе, пуплевĕпе этеме çывăх вĕсем. Тĕрлĕ лару-тăрăва кĕрсе ӳкесçĕ, вĕсенчен вара кашниех хăйне евĕрлĕ майпа хăтăлса тухать.

Кĕске пьесăсемпе сценкăсенчи геройсем – шкул ачисем, пионерсем. Вĕсем пурнăç чăнлăхне ăша хывма, тĕрĕслĕхшĕн кĕрешме, çине тăма вĕренесçĕ, палăртнине пурнăçа кĕртме хăнăхасçĕ. Тен, паянхи вĕренекенсем вĕсенче хăйсене палласа илеймĕç. Апла пулин те хайлавсемпе паллашни пуриншĕн те усăллă. Вĕсем пире иртнĕ вăхăта тавăрасçĕ, ун чухнехи йĕркесене ăнланма май парасçĕ. Тен, тимлĕрех, ĕçченрех, хăюллăрах пулма хистесçĕ. Ахальтен мар кĕнекене вăхăт машинипе танлаштартăм. Вăл пире историн кирек хăш тапхăрне те ертсе çитерĕ. Пирĕн унтан чи ыррине, çуттине, илемлине илсе таврăнмалла.

КĂСĂКЛĂ

# Пуян историллĕ издательство

**«Кĕнеке – пĕлӳ çăлкуçĕ», – тенĕ ĕлĕкех ваттисем. Информаци технологийĕсем анлă сарăлчĕç, Интернет пурнăçа çирĕп кĕрсе вырнаçрĕ пулин те, кĕнеке пĕлтерĕшĕ чакмасть-ха. Алă çапах та çӳлĕк еннеллех туртăнать, чун хăнăхнă хуплашкаллă, типографи сăрриллĕ кĕнекенех ыйтать. Хальхи çамрăксем вуламасçĕ тени те тĕрĕс мар. Интереслĕ хайлавсемпе хăйсем çеç паллашнипе çырлахмасçĕ вĕсем, юлташĕсене те сĕнесçĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ эпир те сире «Вулав тĕнчинче» Чăваш кĕнеке издательствин çĕнĕ кăларăмĕсемпе паллаштаратпăр. Тĕнче, çĕршыв шайĕнче палăрнă литература произведенийĕсем çинчен Интернетра пайтах вуласа пĕлеетĕр. Эпир сире тăван çĕр çинче тухнă кĕнекесем çинчен хыпарлатпăр.**

Паянхи Чăваш кĕнеке издательстви – ăнăçлă аталанса пыракан нумай профильлĕ предприяти. Вăл илемлĕ литература, ача-пăча, вĕренӳпе педагогика, ăслăлăхпа таврапĕлӳ тата ытти литературăна кăларас енĕпе тимлет. Кĕнекесем чăвашла, вырăсла кăна мар, акăлчан чĕлхипе те пичетленеççĕ. Издательство йĕркеленнĕренпе 16 пин ытла кĕнекепе брошюра /ятсен шутне кура/ вулакан патне çитнĕ. Вĕсен пĕтĕмĕшле тиражĕ – 132280 пин экземпляр, вăл шутра – 2012 çулта 110 кăларăм 323,3 пин экземплярлă тиражпа кун çути курнă.

2015 çулхи чӳк уйăхĕн 12-мĕшĕнче Чăваш кĕнеке издательстви йĕркеленнĕренпе 95 çул çитет. Çавна май пĕлтерĕшлĕ те кăсăклă хăш-пĕр самантсемпе хисепсем çинче чарăнса тăрăпăр.

•1920 çулхи чӳк уйăхĕн 12-мĕшĕнче Шупашкарта Пĕтĕм Раççейри Советсен II съезчĕ уçăлнă. Чăваш патшалăх издательствине йĕркелес йышăнăва çирĕплетнĕ. 1921 çулхи кăрлачăн 27-мĕшĕнче «Канаш» хаçат Шупашкарта Тĕп чăваш куçарупа издательство комиссийĕ ĕçлеме пуçăнни çинчен хыпарланă. Ӳлĕмрен кирек мĕнле чăвашла кĕнеке те çак комисси ирĕк парсан кăна тухайнă. 1921 çулхи нарăс уйăхĕн пуçламăшĕнче Наркомнацăн Чăваш уйрăмĕ Патшалăх издательствин Чăваш уйрăмне йĕркеленĕ, мĕнпур чăвашла хаçат-журнала сарасси унăн тивĕçĕ пулса тăнă.

•1920-мĕш çулсенче Чăваш патшалăх издательстви кĕнеке пичетленисĕр пуçне хаçат-журнал кăларса тăнă, пичет продукцине салатнă, типографи ĕçне йĕркелесе пынă.

•1922 çулта издательство заведующине Платон Захарович Львова çирĕплетнĕ.

•1922–1923 çулсенче Чăваш патшалăх издательстви 15 кăларăм /пĕтĕмĕшле тираж – 49351 экземпляр/ пичетленĕ, 1923–1925 çулсенче – 178 кĕнеке /пĕтĕмĕшле тираж – 653 пин экземпляр/.

•1926–1930 çулсенче вĕренӳ кĕнекисене, политика литературине чылай кăларнă, редакторсемпе полиграфистсене хатĕрлессине пысăк тимлĕх уйăрнă. Издательствăра тăрăшнă çамрăк литераторсем /Л.Агаков, В.Алагер, В.Алентей, В.Долгов, В.Давыдов-Анатри, Илпек Микулайĕ, С.Лашман, Ç.Элкер, Хв.Уяр, К.Турхан/ каярахпа паллă чăваш çыравçисем, критикĕсем пулса тăнă.

•1930–1940 çулсенче халăх ыйтнине кура ытларах вĕренӳ кĕнекисем, техника тата ял хуçалăх литератури кун çути курнă. Н.Ашмаринăн 17 томлă словарьне кăларас ĕç малалла пынă. Фольклор материалне тĕпе хурса хатĕрленĕ кăларăмсем, чăваш çыравçисен кĕнекисем пичетленеççĕ. М.Горькин «Мать», «Мои университеты» произведенийĕсем чăвашла тухаççĕ. 1938–1940 çулсенче вăтамран çулталăкне 167 кĕнеке кăларнă.

•Йывăр та нушаллă 1941 çулта 314 кăларăм /2 млн 110 экземпляр/ кун çути курнă. Вăрçă вăхăтĕнче çулталăкне вăтамран 174 кĕнеке тухнă. Вĕсенчен чылайăшĕ Тăван çĕршыва сыхлас, совет салтакĕсен паттăрлăхне кăтартса парас темăсене мала хунă.

•1956–1960 çулсенче вăтамран 304-шар кĕнеке пичетленнĕ, 1961–1965 çулсенче – 272-шер ят.

•1963 çултанпа Чăваш патшалăх издательстви Чăваш кĕнеке издательстви ятпа паллă. 1918–1968 çулсенче Чăваш енре 9393 кĕнеке /пĕтĕмĕшле тираж – 57 млн 909 пин экземпляр/ кун çути курнă, вĕсенчен 6754-шĕ – чăвашла /44 млн экземпляр/.

•XX ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурринче Чăваш кĕнеке издательствин кăларăмĕсен тиражĕ кăна мар, пахалăхĕ те палăрмаллах ӳснĕ. 1969 çулта Пĕтĕм Раççейри кĕнеке искусствин конкурсĕнче «Франци поэчĕсем» сборника еплерех илемлетнине хакласа /ӳнерçи – Э.Юрьев/ II степеньлĕ Дипломпа палăртнă.

•1980-мĕш çулсенче «Книжные новинки» фирма магазинĕ уçăлнă, издательство чăвашсем пурăнакан регионсемпе тата та тачă çыхăнса ĕçлеме пуçланă. Паянхи кун тĕлне Шупашкарта издательствăн 3 лавкки ĕçлет.

•П.В. Денисовăн «Жизнь монаха Иакинфа Бичурина» /1997/ кĕнекинчен «Замечательные люди Чувашии» ярăм йĕркеленсе кайнă.

•Тĕрлĕ çулсенче чăваш классикĕсен произведенийĕсен тулли сборникĕсем, чăваш фольклорĕн тĕслĕхĕсене пухса хатĕрленĕ нумай томлă кăларăмсем вулакансем патне çитнĕ.

•«Библиотека Президента Чувашской Республики» ярăмпа Чăваш енри мухтавлă спортсменсем, ученайсем, çыравçăсем, тухтăрсем, театр ĕçченĕсем тата ытти паллă çынсем çинчен чылай кăларăм пичетленнĕ.

•2006–2011 çулсенче 4 томлă «Чăваш энциклопедийĕ» кун çути курнă.

•1996 çултанпа Чăваш кĕнеке издательстви – Раççейри кĕнеке издателĕсен ассоциацийĕн членĕ.

Çапла, Чăваш кĕнеке издательстви – пуян историллĕ предприяти. Чылай тĕрĕслев витĕр тухнă, чылай йывăрлăхпа хыçа хăварнă вăл. Паян та вулакана пысăк пахалăхлă кĕнекесемпе тивĕçтерессишĕн, çĕнĕ ятсем уçассишĕн ырми-канми тăрăшать. Вулакансем пур чухне кĕнеке пурăнать, эппин, издательство та тухăçлă вăй хурать.

*Страницăна Ольга ИВАНОВА хатĕрленĕ.*

Вениамин ТИМАКОВ

# Сăмах илемне туйсан...

## (сăвă çырма вĕренекенсене пулăшма)

*(Малалли.*
*Пуçламăшĕ 25-32, 34-41, 43-мĕш номерсенче).*

**Неологизмсем.** Чĕлхене нумаях пулмасть кĕнĕ çĕнĕ сăмахсене неологизмсем теççĕ. Чылай вăхăт иртсен, вĕсене пурте лайăх хăнăхса çитсессĕн, çĕнĕ сăмахсенчен чылайăшĕ неологизм шутĕнчен тухаççĕ. Сăмахран, темиçе çул ĕлĕкрех *суйлав, сăнав, вĕçев, кĕнекеçĕ, калав, калавçă* неологизмсем пулнă пулсассăн, хальхи вăхăтра вĕсем – пурте усă куракан сăмахсем. Хальтерех кĕнĕ неологизмсем: хушма хуçалăх, тĕнче уçлăхĕ, çутçанталăкри шайлашу (экология) тата ытти те.

**Архаизмсем.** Хальхи калаçура усă курман кивелнĕ сăмахсене архаизмсем теççĕ. Тĕслĕхсем: *сĕрпӳ (çарпуçĕ), кĕсеп (ремесло), айпăлта (хĕç-пăшал), кевер чул (бриллиант)* тата ытти те. Писательсем историллĕ произведенисенче архаизмсемпе чылай усă кураççĕ. Куçма Турхан «Сĕве Атăла юхса кĕрет» трилогире XV–XVI ĕмĕрсенчи Чăваш çĕршывĕн пурнăçне, çынсен йăлийĕркине кăтартса парас тĕллевпе *тĕкĕрĕç, нукер, сĕрпӳ, пинпӳ, мăрса* йышши сăмахсене кĕртнĕ. Çемен Элкерĕн «Хĕн-хур айĕнче», Хветĕр Уярăн «Таната», И.Петровăн «Çул юппинче» тата ытти произведенисенче те архаизмсене чылаях тĕл пулатпăр.

**Диалектизмсем.** Диалектизмсем тесе вырăнти калаçура кăна усă куракан сăмахсемпе сăмах çаврăнăшĕсене калаççĕ. Сăмахран, анатри чăвашсем **майăр** теççĕ пулсан, тури чăвашсенчен чылайăшĕ ун вырăнне **мырьă** тет. Акă анатри чăвашсем кăна усă куракан хăш-пĕр сăмахсем: **тупа (çатма), вуткасси (турчка), папай (асатте), ипи (асанне)**. Тури калаçура кăна усă кураканнисем: **соп (пăрăн), апат (яшка), мăкăр (вăкăр)**.

Автор пĕр-пĕр герой калаçăвĕн уйрăмлăхне палăртас шутпа диалект сăмахĕсене произведение кĕртме пултарать. Анчах вĕсемпе виçеллĕ, вырăнлă усă курмалла.

Илемлĕ литературăра тата публицистикăра усă курнă диалектизмсенчен литература чĕлхине кĕрсе юлнă сăмахсем сахал мар. Сăмахран: **йăрăс, паранкă, шеп, явлăк** хăй вăхăтĕнче диалектизмсем пулнă пулсассăн, халĕ вĕсем литература чĕлхинче çирĕпленсе пыраççĕ. Çапла вара, вырăнти калаçусенчи илемлĕ, янăравлă, кĕвĕллĕ сăмахсем литература чĕлхине кĕрсе, ăна пуянлатаççĕ. Вĕсенчен чылайăшне поэтсемпе писательсем чĕрĕлĕх параççĕ.

Сăмахран, Петĕр Хусанкай лексикинче пурте усă куракан сăмахсемсĕр пуçне диалектизмсемпе архаизмсем те самаях тĕл пулаççĕ: *юпкур (юрат), талăрса (талхăрса), çав хатер (çав тери), пултăклă (пултаруллă), кĕтĕк (кĕске), хăрхăм (тарçă), аташ (тезка), камал (тăван), несĕл (йăх, ăрат), мехел (вăхăт, май), пĕсмĕх (кĕтес), алхапăл (хăвăрт), сăлпăран (çил-тăман), чаллан (кăвакар), эшкер (ушкăн), элчел (вилĕм), элчĕ (посол)* тата ытти те. Çакăн йышши сăмахсемпе поэт тĕрлĕ тĕллевпе усă курнă: 1/ аваллăх ӳкерчĕкĕсене чĕррĕн сăрласа пама; 2/ вать çынсен калаçăвне çав евĕрлĕрех илтĕнтерме; 3/ чĕлхе янăравлăхне вăйлатма; 4/ чĕлхери синонимсен шутне йышлатма.

Чĕлхене пуянлатса пырас тĕлĕшпе Митта Ваçлейĕ, Ухсай Яккăвĕ, Стихван Шавли, Алексей Воробьев поэтсем, Куçма Турхан, Хĕветĕр Уяр, Илпек Микулайĕ, Юхма Мишши, Юрий Скворцов прозаиксем уйрăмах ăнăçлă ĕçленĕ.

Паллах, произведенисене юриех авалхи тата вырăнти калаçусенчи сăмахсене нумай кĕртсе тултарни автор стильне йывăрлатать кăна, вулакансене ăнланма чăрмав кӳрет. Чăн-чăн художникшăн кунашкал курнăçланни килĕшсĕр. Вăл архаизмсене, неологизмсене, диалект сăмахĕсене пĕлсе, виçеллĕ илет, произведени шухăшĕ, илемĕ, кĕвви вĕсемпе епле çыхăнса тăрассине асра тытать. Çапла вара, республикăри тĕрлĕ вырăнти калаçусен халиччен литература чĕлхине кĕмен чи лайăх тĕслĕхĕсем çĕнĕ сăвăсемпе поэмăсенче, калавсемпе романсенче чĕрĕлĕх туянаççĕ, тивĕçлĕ пулсан, çыравçăсемпе вулакансен «сăмах лаççинче» туптанса, литература чĕлхин «сӳпçине» яланлăхах кĕрсе юлаççĕ.

Чĕлхене пуянлатас тĕллевпе писательсем синонимсемпе те анлă усă кураççĕ.

**Синоним** тесе тĕрлĕ сасăсенчен пулнă, пĕр евĕрлĕрех пĕлтерĕшлĕ сăмахсене калаççĕ. Тĕслĕхрен, çумăр пирки эпир «çурĕ», «юхтарчĕ», «ислетрĕ», «шăпăртатрĕ» тата ытти сăмахсемпе те калама пултаратпăр. Шухăш, пĕлтерĕш, туйăм, стиль енчен синонимсем нумай тĕрлĕ. Пĕлтерĕшĕ енчен пĕр пекрех пулин те, ку сăмахсем пĕр тан шухăшлă теме çук. Кашни синонимăнах хăйĕн уйрăмлăхĕ пур. «Çумăр шăпăртатрĕ» тесен, çумăр вăйлах çуманнине ăнланатпăр, «тăкрĕ» е «юхтарчĕ» тесен, ку ĕç вăйлă пулса иртнине туятпăр. Писатель çак уйрăмлăхсене шута илет, кирлĕ сăнар, кĕвĕ, ритм тума чи вырăнлă синонимсем шырать.

Синонимсем чĕлхере пурте усă куракан сăмахсем хушшинче те, литература чĕлхинчи сăмахсемпе диалектизмсем хушшинче те пулаççĕ. Литераторсенчен чылайăшĕ тăван чĕлхен мĕнпур пуянлăхĕпе – анатри чăвашсеннипе те, тури чăвашсеннипе те – анлă усă кураççĕ. П.Хусанкай пултарулăхĕнче, сăмахран, *мамак, апи, пичи* сăмахсем те (тури калаçу), вĕсен анатри синонимĕсем те *(асанне, анне, тете)* пур. Явлăк – *тутăр, çытар – минтер, икерчĕ – куймак, çенĕк – алкум, сăпка – шăнаршă, янтă – хатĕр, йĕр – макăр* тата ытти нумай тĕслĕхсем поэт анатрипе тури калаçусене пĕрешкелех юратса вĕренсе пынине палăртаççĕ. Калас пулать, Хусанкай хăш чухне стильшĕн юри анат е тури калаçăвăн тĕслĕхсемпе усă курать. Акă «Тури Вылра туй сикет» поэмăра сăвăç литература чĕлхинчи «анне» вырăнне геройсене час-часах тури чăвашсем хушшинче сарăлнă «апи» сăмахпа калаçтарать. «Кĕлту, кинĕм, апуна сарă, вăрăм тунăшăн», тесе такмаклать туй халăхĕ.

Хусанкай вырăс чĕлхинчен кĕнĕ сăмахсене те час-часах усă курнă. Хăш чухне произведенире ку тĕслĕхсен чăвашла эквиваленчĕсем те тĕл пулаççĕ: *приклад – пăшал кӳпчекĕ, вилка – йĕпсе, судья – тиркĕш* тата ытти те.

Поэт япала ячĕсен анлă сарăлнă аффиксĕсемпе усă курса, çĕнĕ сăмахсем тунă. Вĕсем ăнланмалла, чăваш чĕлхи янăравĕпе килĕшсе тăраççĕ: *ленинçă, мичуринçă, чĕлĕмçĕ, историçĕ, рифмăçă, драмăçă, хăрав, ятлав, шырав...*

### Поэзири пайăрăмсем (детальсем)

Ухсай Яккăвĕн «Ту урлă çул» сăвăлла романĕнчи пĕр сыпăкра Калляпа Талпас Çеменĕн çемйисем хирĕçнине çырса кăтартнă. Вĕсем малтан туслах пулнă. Хирĕçӳ мĕнпурĕ те кӳршĕсен автанĕсем çапăçма пуçланăран сиксе тухать. Каллясен автанĕ Çеменсенне юнлатса, амантса пĕтерет. Çакна курсан, Çемен арăмĕ Пасса аппа Каллясен автанне алтуйипе çапса ӳкерет. Картишне Калля арăмĕ Чинавье ситсе тăрать. Çеменпе Калля та тухаççĕ. Часах кӳршĕсем пĕр-пĕринпе тытăçса ӳкеççĕ.

Ку саманта поэт мыскарашăн, вулакана култарасшăн кăна çырса кăтартмасть. Сăвăç тĕллевĕ – колхозсем йĕркелеме пуçланнă тапхăрти чăваш хресченĕсен шухăш-туйăмне сăнласа парасси. Тӳрĕ кăмăллă, ĕçчен, анчах сĕнниччен шиклененкен Калляпа Çемен малтанлăха харпăр хуçалăх туйăмĕпех пурăннă. Автан мыскари çакна тата лайăххах кăтартать.

**(Малалли пулать).**

### Кушакпа йытă

Пĕррехинче кушака
Йытă калать васкаса:
«Пул эс ман килте хуçа,
Пурăнар-ха савăнса.
Хутăн кăмака пӳртре,
Шăши тытăн кĕлетре.
Эпĕ çӳрĕп сунара
Мĕн те пулин шырама».
…Ак часах хĕлле килет,
Вутă та пĕтсе çитет.
«Эп каятăп вут касма», –
Терĕ йытă кушака.
«Юрĕ, кай, эпĕ юлатăп,
Хальлĕхе хуçа пулатăп.
Кĕç пĕçерĕп ак яшка,
Хутса ярăп кăмака».
Касчĕнех сӳрет йытти,
Килте кĕтет кушакки.
Тĕттĕмре, çур çĕр иртсен
Тухрĕ кушак килĕнчен,
Утса кайрĕ вăрмана
Йытă-тусне шырама.
Вăрмантах иккен йытти,
Вăрçать ăна кушакки:
«Мĕн ларатăн эс кунта?
Киле кайрăмăр! Айта!»
«Пит ĕшентĕм вут татса,
Канас терĕм эп ларса».
Утрĕç туссем кил енне,
Ларса çирĕç апатне.
Пурнăç тытăнчĕ ăнма –
Лайăх иккĕн пурăнма.

*Кристина ВАСИЛЬЕВА.*
Елчĕк районĕ,
Аслă Таяпа.



⊚ *Кристина ВАСИЛЬЕВА* (Елчĕк районĕ, Аслă Таяпа) *ӳкерчĕкĕ.*

### Иванов çăлтăрĕ

Сăвăç тухнă халăхран –
Слакпуçĕнче çуралнă.
Ăна ашшĕ ачаран
Пĕлӳ пама шутланă.

Тăван халăх чĕлхине
Кĕçтук хытă юратнă.
Унăн сăвви-юррине
Ялсем тăрăх пуçтарнă.

Вăл хайланă юмахсем
Нумай çынна пăлхатнă.
Чĕр сăмахлă сăввисем
Чунра ыр йĕр хăварнă.

Тĕрлĕ халăх чĕлхине
Халь «Нарспие» куçарнă.
Унăн çамрăк авторне
Вилĕмсĕре кăларнă.

Паян вара чăвашра
Ăна пĕлмен çын та çук.
Ивановăн çăлтăрĕ
Нихăçан та сӳнес çук.

*Андрей ВАСИЛЬЕВ,*
*8 «а» класс.*
Красноармейски районĕ,
Трак шкулĕ.



⊚ *Ксюша КОШЕЛЕВА* (Йĕпреç районĕ, Çăкалăх) *ӳкерчĕкĕ.*

### Кĕркунне

Çу кунĕсем иртеççĕ,
Ак çитрĕ кĕркунне.
Сар çулçăсем вĕçеççĕ,
Ӳкеççĕ çĕр çине.

Шур юр та çуса илчĕ
Хĕле ас илтерсе.
Хур кайăксем вĕçеççĕ,
Каяççĕ ăш енне.

*Николай ТАРАСОВ.*
Патăрьел районĕ,
Аслă Чемен ялĕ.

### Анне

Тав тăватăп аннене –
Вăл çуратнă-çке пире.
Юрататăп куллине,
Вăл – асамлă та хитре.

Тавтапуç сана, анне,
Мана пăхса ӳстернишĕн.
Савнăç килчĕ чĕрене
Эсĕ ман анне пулнишĕн.

*Таня ШАДРИКОВА.*
Елчĕк районĕ,
Таяпа Энтри шкулĕ.



⊚ *Ксюша КОШЕЛЕВА* (Йĕпреç районĕ, Çăкалăх) *ӳкерчĕкĕ.*

# Хӑнара – «Тетте» журнал




Галина ЗОТОВА

## Вӑтӑр ҫичӗ пӗртӑван

Юмах




Александр ПЛЕХАНОВ

Аслӑ Атӑл хӗрринче шурӑ уй сарӑлса выртать Унта 37 кермен мӑнаҫлӑн курӑнса ларать. Кашнинче пӗрер сасчун пурӑнать. Ҫапла, шӑп та лӑп пӗрер. Вӑтӑр ҫичӗ пӗртӑван, уйрӑмшарӑн сас кӑларайманскерсем, пӗрле пухӑнсан пӗр чарӑнми чӗвӗлтетнӗ. Э, Ӗ, Ӳ, И – ҫемҫе кӑмӑллӑскерсем, А, Ӑ, О, У, Ы, кӑмӑлӗпе те ҫирӗпрехскерсем, хыттӑнрах калаҫма юратнӑ.

Е, Ё, Ю, Я – йӗкӗрешсем, пиччӗшӗпе Й-па туслӑ, кӑмӑлне кура икӗ сасӑпа шӑхӑркаласа ҫӳреҫҫӗ. Чӗлхесӗр Ь тат Ъ пиччӗшӗсем ҫумне хӗсӗнме юратаҫҫӗ. Пӗрремӗшӗ пиччӗшӗсен кӑмӑлне ҫемҫетет, иккӗмӗшӗ ҫыпҫӑнсан вара пиччӗшӗсем тарӑхаҫҫӗ.

Саспалисен ывӑлӗсем те тӗрлӗрен. Улттӑшӗ В, Й, Л, М, Н, Р пӗрмай янӑрашаҫҫӗ. Ҫав вӑхӑтрах Б, Г, Д, Ж, З хӑйсен П, К, Т, Ш, С мӑшӑрӗсемпе пӗр ҫӑвартан шӑкӑлтатса пурӑнаҫҫӗ.

Хайхисем телей шырама кайма тӗллев тытаҫҫӗ. Кашниех пӗрер япала илчӗҫ: А – алсиш, Ӑ – ӑскӑч, Б – бинокль, Д – домино, Ж – жетон, З – значок… Нумай-и, сахал-и вӑхӑт иртрӗ, пӗртӑвансем хӑйсене килӗшекен вырӑнта пурӑнма тытӑнаҫҫӗ. А – Атӑл хӗрринче, Б – Байкал кӳлли таврашӗнче, мӑшӑрӗ П – Парижа ҫитнӗ, В – Вильнюсра, Г – Германире, Д – Днепр тӑрӑхӗнче, Е – Енисей хӗрринче, Ж – Женевӑра, З – Зеланди утравӗсем ҫинче, И – Индире, Й – Йошкар-Олара, К – Кавказ тӑвӗсем хушшинче, Л – Лена юханшывне кӑмӑлларӗ, М – Мускавра тӗпленчӗ, Н – Нью-Йорка ҫитсе курас терӗ, О – Одессӑра ҫӳрет, П – Пушкӑртстанра пулса курас терӗ, Т – Тутарстанра…

Анчах пӗччен пурӑнма тунсӑх та кичем. Кашни тус шырама пуҫларӗ. Пӗрле йывӑрлӑхсене парӑнтарма та ҫӑмӑл, пӗрле ӗҫлеме те кӑмӑллӑ. Кашни саспалли хӑйне валли темиҫе тус та тупма пултарчӗ тет. А – арланпа, Ӑ – ӑсанпа, Б – бульдогпа, В – вӗршӗнпе, Г – гагрӑпа, Д – динозаврпа, Е – енотпа, Ё – ёнепе, М – мулкачпа, У – упапа…

Пӗр кун иртрӗ-и, иккӗ-и, эрне-и – пӗртӑвансем тӑван килшӗн тунсӑхлама пуҫларӗҫ тет. Шӑп та лӑп 37 талӑкран мӗн пур саспалли тӑван килне таврӑнчӗ. Тунсӑхласа ҫитнӗскерсем пӗр-пӗрин ҫумне йӑпшӑнчӗҫ. Пӑх та кур, куҫ умӗнчех «ТЕТТЕПЕ» «ТАНТӐШ» ҫуралчӗҫ! «Теттепе» мӗн ачаран туслӑ шӑллӑмпа йӑмӑк кӑшт ӳсерех алла «Тантӑш» илетех.

ПОЭТСЕМ – АЧАСЕМ ВАЛЛИ

Николай ТЕВЕТКЕЛ

## Ҫутҫанталӑк кил-йышӗ

Упасем, пӑшисем – ҫутҫанталӑк кил-йышӗ –
Чӑвашъен вӗсемпе ӗмӗр пулнӑ тӑван.
Пысӑк-пысӑк ыйту тепӗр чух ҫиллӗн чышӗ:
«Шухӑшла! Ма чакать таврари сӗм вӑрман?»



Упасем,
пӑшисем…
Ҫутҫанталӑк
кил-ҫурчӗ
ҫыншӑн ҫеҫ-и
тӑван? Ан шутла
эс тем-тем.
Чӗрчунсем те
санпа ӗмӗрех
ырӑ курччӑр,
вилӗмпе ан
юнатӑр пӑшаллӑ
этем.

Упасем, пӑшисем… Вӗсемпе кӳршӗлле
авалтан пурӑнатпӑр пӗрле.

## Вата чӑх инкекӗ



Кӑтиклерӗ вата чӑх
ҫунатне ҫапса.
Эх, сывлать вӑл кӑх! та кӑх!
урипе тапса.
Пӗртен-пӗр ҫӑмартине
кайнӑ сӗтӗрсе шӑши.
Ҫак улах килкартине
шанма пулӗ-ши?
Вӑрттӑн чӑмнӑ шӑтӑкне
ҫав вӑр-вар шӑши.
Вата чӑх тӑкать тӗкне –
пысӑк-ҫке нуши.
Ҫав шӑши шӑтӑкӗнчен
ҫӗр ҫине тухмасть.
Вата чӑх сывлать кӑх! кӑх!
урипе тапса.
Мӗн каласшӑн вата чӑх
ҫунатне ҫапса?

● ВӐЙӐ-КУЛӐ УҪЛАНКИ



**Ухӑ йӗппи хӑш япала виттӗр тухать, хӑшне – ҫук? Хуравне тӗрӗс пӗл.**